1938
ФЕВРАЛЬ
12
ШĂМАТКУН
35 (4848) -мĕш №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

„РСФСР Аслă Советне суйламалли Положени" çинчен

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла йышăнать:
„РСФСР Аслă Советне суйламалли Положени" пройектне ырлас, ăна пăхса тухма Пĕтĕм Российăн XVI-мĕш созыври Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн IV-мĕш Çессине тăратас.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ М. КАЛИНИН.
Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕшĕн—
Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕн членĕ А. АРТЮХИНА.

Мускав, Кремль.
1938 çулхи февралĕн 10-мĕш.

ПРОЙЕКТ

РСФСР Аслă Советне суйламалли ПОЛОЖЕНИ

I-мĕш сыпăк

Суйлав системи

1 статйа. РСФСР Конституцийĕн 138 статйи тăрăх, РСФСР Аслă Советне депутатсене суйлавçăсем пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

2 статйа. РСФСР Конституцийĕн 139 статйи тăрăх депутатсен суйлавĕ пурне те тивĕçлĕ: РСФС Республикĕн 18 çул тултарнă пур граждăнсен те, мĕнле расăпа нациоңаңнăç пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социаллă сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр,—ăсран тухнисемсĕр тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшăнма та, РСФСР Аслă Советне суйланма та права пур.

3 статйа. РСФСР Конституцийĕн 140 статйи тăрăх, депутатсен суйлавĕ пĕртан: кашни гражданинăн пĕр сасă пур; суйлавсенче пур граждăнсем те пĕртан тивĕçпе пулаççĕ.

4 статйа. РСФСР Конституцийĕн 141 статйи тăрăх, хĕрарăмсем суйлас тата суйланас правапа арçынсемпе пĕртан усă кураççĕ.

5 статйа. РСФСР Конституцийĕн 142 статйи тăрах, Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăракан граждăнсем суйлас тата суйланас правапа мĕн пур граждăнсемпе пĕртан усă кураççĕ.

6 статйа. РСФСР Конституцийĕн 146 статйи тăрăх, суйлав чухне кандидатсене суйлав округĕсем тăрăх тăратаççĕ.

II-мĕш сыпăк

Суйлавçăсен спискисем

7 статйа. Суйлавçăсен спискине хуласенче ĕçсынни депутачĕсен хула Совечĕсем тăваççĕ, районсене пайланнă хуласенче—район Совечĕсем; йалсенче—ĕççынни депутачĕсен йал (станицă, хутăр, кишлак, аул) Совечĕсем.

8 статйа. Суйлавçăсен спискисене пур граждăнсене те,—суйлав прави пуррисене, спискăсене тунă вăхăта çав Совет территорийĕнче (йалан йе вăхăтлăха) пурăнаканнисене, суйлав кунĕ тĕлне 18 çула çитнисене кĕртеççĕ.

9 статйа. Суйлавçăсен спискисене суд приговорĕсем тăрăх суйлав прависĕр хăварнă çынсене суд приговорĕнче суйлав прависĕр хăварма кăтартнă пĕтĕм срук хушшинче, çавăн пекех тата саккун кăтартнă йĕрке тăрăх ăсран тухнă тесе шутланă çынсене кĕртмеççĕ.

10 статйа. Суйлавçăсен спискисене кашни суйлав участки тăрăх алфавит йĕркипе, суйлавçăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, миçе çултине тата ăçта пурăннине кăтартса тăваççĕ те, ĕççынни депутачĕсен Совечĕн председателĕпе секретарĕ алă пусаççĕ.

11 статйа. Суйлавçăсене нихăшне те пĕр суйлав спискине кĕртнинчен пуçне урăх спискăна кĕртме йурамасть.

12 статйа. Çар чаçĕсенче тата çар пĕрлешĕвĕсенче тăракан суйлавçăсен спискисене командовани тăвать, вĕсене командирпа çар комиссарĕ алă пусаççĕ. Çарта ĕçлекен мĕн пур ытти çынсене суйлавçăсен спискисене вĕсем пурăнакан вырăнсенче ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем кĕртеççĕ.

13. статйа Больницасемпе ача çуратмалли çуртсем, санаторисем тата ытти сыватакан учреждениссем çумĕнче тăвакан суйлав участкисенчи суйлавçăсен спискине чирлĕ граждăнсене те тата суйлав кунĕнче дежурствăра пулакан медицинă персоналне те кĕртеççĕ.

Скарлатинăпа тата дифтерипе чирлисен отделенийĕсенчи, çавăн пекех лепрозорисенчи чирлĕ çынсем суйлава хутшăнма пултараймаççĕ.

14 статйа. Суйлав умĕн 30 кун малтан ĕççынни депутачĕсен Совечĕ суйлавçăсен спискисене пурте пăхса тухма кăларса çакать йе çав спискăсемпе Совет çуртĕнче паллашма суйлавçăсене май туса парать.

15 статйа. Суйлавçăсен тĕп спискисем ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Советĕнче тата çар чаçĕсенче йе çар пĕрлешĕвĕсенче упранса тăраççĕ.

16 статйа. Суйлавçăсен спискине çырса пĕлтернĕ вăхăтпа суйлав кунĕ хушшинче суйлавçă урăх вырăна куçсан, кивĕ вырăнти ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕ ăна, Тĕп суйлав комиççийĕ йышăннă формăпа „сасăлама права паракан удостоверени" парать те суйлавçăсен спискинче—„тухса кайнă" тесе паллă тăвать; йаланлăха йе вăхăтлăха пурăнма куçнă çĕнĕ вырăнта суйлавçа, хăй кăмне пĕлтерекен удостоверени, çавăн пекех тата „сасăлама права паракан удостоверени" кăтартсан, суйлавçăсен спискине кĕртеççĕ.

17 статйа. Суйлавçăсен спискинче тĕрĕсмарлăх пурри çинчен (спискăсене кĕртменни, спискăсенчен кăларни, хушамата, йата, ашшĕ йатне пăсса çырни, суйлав прависĕр хăварнă çынсене спискăна тĕрĕс мар кĕртни çинчен) зайавлени спискăсене çырса пĕлтернĕ ĕççынни депутачĕсен Советне памала.

18 статйа. Ĕççынни депутачĕсен Совечĕн ĕçтăвакан комитечĕ суйлавçăсен спискинчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă кашни зайавленийе виçĕ кун хушшинче пăхса тухма тивĕç.

19 статйа. Суйлавçăсен спискинчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă зайавленийе пăхса тухнă хыççăн, ĕççынни депутачĕсен Совечĕн ĕçтăвакан комитечĕ суйлавçăсен спискине йе кирлĕ тÿрлетÿсем кĕртме, йе зайавлени паракана унăн зайавленине мĕн сăлтавпа сирни çинчен çырнă справкă пама тивĕç; ĕççынни депутачĕсен Совечĕн решенийĕпе килĕшмесен, зайавлени паракан халăх судне жалăбă пама пултарать.

20 статйа. Халăх сучĕ виçĕ кун хушшинче, судăн усă ларăвĕнче, зайавлени паракана тата Совет представителне чĕнсе, спискăри тĕрĕсмарлăх çинчен панă жалăбăна пăхса тухма тивĕç, хăйĕн решенине çийĕнчех зайавлени паракана та, çаплах тата Совета та пĕлтерме тивĕç. Халăх сучĕн решенийĕ татăклă.

III-мĕш сыпăк

РСФСР Аслă Советне суйламалли суйлав округĕсем

21 статйа. РСФСР Конституцийĕн 25 статйи тăрăх РСФСР Аслă Советне РСФСР граждăнĕсем суйлав округĕсем тăрăх суйлаççĕ.

22 статйа. РСФСР Аслă Советне суйламалли округ çак принциппа пулать: округ пуçне 150.000 халăх. РСФСР Аслă Советне суйламалли кашни суйлав округĕ пĕр депутат йарать.

23 статйа. РСФСР Аслă Советне суйламалли суйлав округĕсене уйăрассине РСФСР Аслă Совет Президиумĕ тăвать.

24 статйа. РСФСР Аслă Советне суйламалли суйлав округĕсен спискине РСФСР Аслă Совет Президиумĕ суйлавсен кунне уйăрса хунипе пĕр вăхăтра пичетлесе пĕлтерет.

IV-мĕш сыпăк

Суйлав участкисем

25 статйа. Суйлав бÿллетенĕсене илсе тăма тата сасăсене шутласа тухма РСФСР Аслă Советне суйлав округĕсене кĕрекен хуласемпе районсен территорийĕ суйлав участкисене пайланать.

26 статйа. Суйлав участкисене хуласенче ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем тăваççĕ, районсене пайланнă хуласенче—ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсем; йалти вырăнсенче—ĕççынни депутачесен район Совечĕсем.

27 статйа. Суйлав участкисене уйăрассине суйлавччен 45 кунран кайа йулмасăр малтан тăваççĕ.

28 статйа. Йалсовет территорийĕ, унта пурнакансем икĕ пин çынран ытла мар пулсан, йалан пекех, пĕр суйлав участки пулса тăрать; кашни станицăра, йалта, кишлакра, аулра, унта пурнакансем 500 çынран пуçласа 2000 çынран ытла мар пулсан—уйрăм суйлав участки организацилеççĕ.

Халăх хисепĕ 500 çынран сахалрах, анчах 300 çынран сахал мар йалсенче йе йалсен ушкăнĕнче, çавăн пек йалсем суйлав участки центрĕнчен 10 километр ытла инçетре пулсан, уйрăм суйлав участкисем тума йурать.

29 статйа. Çурçĕрпе хĕвелтухăçри инçетри районсенче, вак йалсем ытларах çĕрте, суйлав участкисене 100 çынран сахал мар халăх хисепĕпе организацилеме йурать.

Çурçĕрти нацилĕ округсенче, çавăн пекех тата сăрт-туллă тата халăх куçса çÿрекен районсенче РСФСР Аслă Совет Президиумĕ ирĕк пани тăрăх 100 çынран сахалрах, анчах 50 çынран сахал мар халăх хисепĕпе суйлав участкисем организацилеме йурать.

30 статйа. Хуласем, промышленнăçлă пунктсем, çавăн пекех йалсем тата йалсовет территорийĕ, унта пурнакансем 2.000 ытла шутланаççĕ пулсан, суйлав участкисене пайланаççĕ, пĕр суйлав участкинче пурăнакансен хисепĕ 1.500—2.500 çын пулмала.

31 статйа. Çар чаçĕсем тата çар пĕрлешĕвĕсем уйрăм суйлав участкисем пулса тăраççĕ, вĕсенче суйлавçăсен хисепĕ 50-ран сахал мар тата 1.500 суйлавçăран ытла мар пулмала, вĕсем чаçсем йе çар пĕрлешĕвĕсем тăракан вырăнсенчи суйлав округне кĕреççĕ.

32 статйа. Больницасенче, ача çуратмалли çуртсенче, санаторисенче, инвалидсен çуртĕсенче суйлавçăсен хисепĕ 50-ран кайа мар пулсан, уйрăм суйлав участкисем тăваççĕ.

Темиçе корпуслă больницасенчи уйрăм корпус çумĕнче, вĕсенче кашнинче 50 суйлавçăран сахал мар пулсан, суйлав участкисем тума йурать.

Уйрăм суйлав участкисем туман больницасемпе сыватакан ытти учрежденисенче суйлав бÿллетенĕсене суйлав комиççисен уйăрнă членĕсем илме пултараççĕ. Ун пек чухне больницасене уйрăм суйлав йешчĕкĕсем параççĕ.

33 статйа. Суйлавсен кунĕнче ишсе çÿрекен кимĕсем, вĕсенче суйлавçăсен хисепĕ 25-рен сахал мар пулсан, уйрăм суйлав участкисем тума пултараççĕ, вĕсем кимĕ çырăннă вырăнти суйлав округĕсене кĕреççĕ.

Инçе кайакан, суйлав кунĕнче çул çинче пулакан пассажир пойăсĕсем çинче, „сасăлама права паракан удостоверени" пур пассажирсенчен суйлав бÿллетенĕсене илме, суйлав участкисем тăваççĕ.

V-мĕш сыпăк

Суйлав комиççийĕсем

34 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççине общество́лă организацисен тата ĕççынни общество́исен представителĕсенчен тăваççĕ, ăна РСФСР Аслă Совет Президиумĕ суйлавсен кунĕ çинчен пичетлесе пĕлтернипе пĕр вăхăтра çирĕплетет.

35 статйа. Тĕп суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председател, председателĕн заместителĕ, секретар тата 12 член.

36 статйа. Тĕп суйлав комиççийĕ:

а) РСФСР пĕтĕм территорийĕнче суйлавсем пынă хушăра „РСФСР Аслă Советне суйламалли Положенийе" ĕçе тĕрĕс кĕртсе пынине сăнаса тăрать;

б) суйлав комиççийĕсем тĕрĕс мар тунисем çинчен панă жалăбăсене пăхса тухать тата жалăбăсем тăрăх татăклă решени йышăнать;

в) пичетсен, суйлав йешчĕкĕсен образецĕсене, „сасăлама права паракан удостоверенин" формине, суйлав бÿллетенĕсен тата вĕсене вальльи конвертсен формипе тĕсне, суйлавçăсен списки формине, сасăсене шутласа тухмалли протоколăн формине, суйланни çинчен паракан удостоверени формине туса парать;

г) РСФСР Аслă Советне суйланă депутатсене регистрацилет;

д) РСФСР Аслă Совечĕн Мандат Комиççине суйлавсен делопроизводствине парать.

37 статйа. РСФСР Аслă Советне суйламалли кашни суйлав округĕнче РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççине тăваççĕ.

38 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççийĕсене общество́лă организацисен тата ĕççынни общество́исен представителĕсенчен тăваççĕ, вĕсене АССР Аслă Совет президиумĕсем, крайсен, облăçсен, автономлă облăçсен тата нацилĕ округсен ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем суйлавччен 55 кунран кайа йулмасăр малтан çирĕплетеççĕ.

39 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председател, председателĕн заместителĕ, секретар тата 8 член.

40 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççийĕ:

а) ĕççынни депутачĕсен совечĕсен тивĕç ĕçтăвакан комитечĕсем суйлав участкисене вăхăтра организациленине сăнаса тăрать;

б) суйлав участкисен йĕрке номĕрĕсене тăвать;

в) суйлавçăсен спискисене вăхăтра тунине тата вĕсем çинчен пурне те пĕлтернине сăнаса тăрать;

г) РСФСР Аслă Советне суйлама РСФСР Конституцийĕ тата „РСФСР Аслă Советне суйламалли Положени" хушнисене пăхăнса тăратнă кандидатсене регистрацилет;

д) участкăри суйлав комиççийĕсене йышăннă формăлă суйлав бÿллетенĕсем тата конвертсем парса тăрать;

е) сасăсене шутласа тухать тата округ тăрăх суйлав результачĕсене палăртать;

ж) Тĕп суйлав комиççине суйлавсен делопроизводствине тăратать;

з) суйланнă депутата суйлани çинчен удостоверени парать.

41 статйа. Участкăри суйлав комиççине общество́лă организацисен тата ĕççынни общество́исен представителĕсенчен тăваççĕ, вĕсене хуласенче ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем, районсене пайланнă хуласенче—ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕсем, йалти вырăнсенче— ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕсем суйлавччен малтан 40 кунран кайа йулмасăр çирĕплетеççĕ.

42 статйа. Участкăри суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председател, председател заместителĕ, секретар тата 2—6 член.

43 статйа. Участкăри суйлав комиççийĕ:

а) суйлав участки тăрăх суйлав бÿллетенĕсене илсе тăрать;

б) РСФСР Аслă Советне депутата суйлама тăратнă кашни кандидатшăн панă сасăсене шутласа тухать;

в) суйлавсен делопроизводствине Округри суйлав комиççине парать.

44 статйа. Тĕп суйлав комиççин, округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççийĕсен ларăвĕсем, вĕсенче пĕтĕм комиççи составĕн çурри ытла пулсан, тĕрĕс шутланаççĕ.

45 статйа. Суйлав комиççийĕсенче пур ыйтусене те сасăсен ахальытларахăшĕпе татса параççĕ; сасăсем пĕр тан пулсан председател сасси ытларах тайă парать.

46 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас ĕçри расхутсем государствă шутĕнчен пулаççĕ.

47 статйа. Округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççийĕсен Тĕп суйлав комиççийĕ çирĕплетнĕ образецлă хăйсен пичечĕ пур.

VI-мĕш сыпăк

РСФСР Аслă Совечĕн депутатне суйлама кандидатсем тăратас йĕрке

48 статйа. РСФСР Аслă Советне кандидатсем тăратас права—РСФСР Конституцийĕн 145 статйи тăрăх—общество́лă организацисемпе ĕççынни общество́исене: коммунисла партилĕ организацисене, профеççилĕ союзсене, кооперативсене, çамрăксен организацийĕсене, культурăлă общество́сене тата саккун йĕркипе регистрациленĕ ытти организацисене тивĕçлĕ.

49 статйа. Кандидатсем тăратас правана общество́лă организацисен тата ĕççынни общество́исен тĕпри оргăнĕсем те, вĕсен республикăсенчи, крайсенчи, облăçсенчи тата районсенчи оргăнĕсем те, çавăн пекех предприйатисенче—рабочисемпе служащисен, çар чаçĕсенче—красноармейцасен пĕрлехи пухăвĕсем, çавăн пекех тата колхозсенче—хресченсен, совхозсенче—совхоз рабочийĕсемпе служащисен пĕрлехи пухăвĕсем пурнăçа кĕртеççĕ.

50 статйа. Депутата суйлама тăратнă кандидатсем РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççийĕсен, çавăн пекех тата вĕсене депутата суйлама кандидата тăратнă округри Участкăри суйлав комиççисен членĕнче тăма пултараймаççĕ.

51 статйа Суйлавччен 30 кун малтан, РСФСР Республикĕн Аслă Советне депутатсем суйлама кандидатсем тăратакан общество́лă организацисем йе ĕççынни

(Йулашки 2-мĕш страницăра).

РСФСР Аслӑ Советне суйламали ПОЛОЖЕНИ

(Й У Л А Ш К И)

общчествисем пурте депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсене, ӑçта суйламалине кура, РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Округри суйлав комиççийӗнче регистрацилемеле.

52 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Округри суйлав комиççийӗсем общчествӑлӑ организацисемпе ӗççынни общчествисем РСФСР Конституцийӗ тата „РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положени" хушнисене пӑхӑнса тӑратнӑ кандидатсене пурне те регистрацилеме тивӗç.

53 статйа. РСФСР Аслӑ Советне депутата суйлама кандидатсем тӑратакан общчествӑлӑ организаци йе ӗççынни общчестви Округри суйлав комиççине çак документсене тӑратма тивӗç:

а) депутата суйлама кандидат тӑратнӑ пуху йе лару. Президиум членӗсем алӑ пуснӑ, вӗсем миçе çултине, ӑçта пураннине, кандидат тӑратнӑ организацин йатне, депутата суйлама кандидат тӑратнӑ пуху йе лару ӑçта, хӑш вӑхӑтра, унта миçе çын пулнине кӑтартса çырнӑ протокола, çавӑнпа пӗрлех протоколра депутата суйлама тӑратнӑ кандидатӑн хушаматне, йатне, ашшӗ йатне, вӑл миçе çултине, ӑçта пураннине, партилӗхне, мӗн ӗçпе пураннине кӑтартса çырмала;

б) депутата суйлама тӑратнӑ кандидат вӑл çав суйлав округӗнче хӑйне тӑратнӑ организацирен баллотировкӑна тӑма килӗшни çинчен зайавлени.

54 статйа. РСФСР Аслӑ Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидат пӗр округра кӑна сасӑланма пултарать.

55 статйа. РСФСР Округри суйлав комиççийӗ депутата суйлама тӑратнӑ кандидата регистрацилеме йышӑнманни çинчен икӗ кунлӑ срукра Тӗп суйлав комиççине жалӑба пама пулать, Тӗп Суйлав Комиççийӗн решенийӗ татӑклӑ пулса тӑрать.

56 статйа. РСФСР Аслӑ Советне депутата суйлама регистрациленӗ кашни кандидатӑн хушаматне, йатне, ашшӗ йатне, миçе çултине, мӗнле ӗçпе пураннине, партилӗхне тата кандидат тӑратнӑ организацин йатне Округри суйлав комиççийӗ суйлавччен 25 кун маллтан пичетлесе пӗлтерет.

57 статйа. РСФСР Аслӑ Советне депутата суйлама регистрациленӗ пур кандидатсене те суйлав бӳллетенне обйазателлӑ кӗртмеле.

58 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Округри суйлав комиççисен РСФСР Аслӑ Советне суйличчен 15 кун маллтан суйлав бӳллетенӗсене пичетлемеле те пур участкӑри суйлав комиççисене те салатса памалӑ.

59 статйа. Суйлав бӳллетенӗсене суйлав округӗнче пурнакан халӑх чӗлхипе пичетлеççӗ.

60 статйа. Суйлав бӳллетенӗсене Тӗп суйлав комиççийӗ йышӑннӑ формӑпа, тата пур суйлавçӑсене те суйлав бӳллетенӗсем пама çителӗклӗ чухлӗ пичетлеççӗ.

61 статйа Округри суйлав комиççийӗнче регистрациленӗ кандидата тӑратнӑ кашни организацине, çавӑн пекех тата РСФСР кашни гражданинне, РСФСР Конституцийӗн 129 статйи тӑрӑх, çав кандидатшӑн пухусенче, пичетре тата урӑх майсемпе те ним чӑрмавсӑр агитацилеме права параççӗ.

VII-мӗш сыпӑк

Сасӑлас йӗрке

62 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйласси пӗр кун хушшинче—пӗтӗм РСФС Республикӗпех пӗр кун пулса иртет.

63 статйа РСФСР Аслӑ Советне суйлас куна РСФСР Аслӑ Совечӗн Президиумӗ суйлав срукӗччен 2 уйӑх малтан палӑртса хурать. Суйлав ӗçлемен кун пулса иртет.

64 статйа. Суйлав умӗнхи йулашки 20 кун хушшинче участкӑри суйлав комиççийӗ кулленех суйлав кунӗпе суйлав ӑçта пуласси çинчен пичетлесе йе мӗнле те пулин урӑх майпа суйлавçӑсене анлӑн пӗлтерсе тӑрать.

65 статйа. Суйлавçӑсем сасӑ парасси суйлав кунӗнче вырӑнти вӑхӑтпа ирхине 6 сехетрен пуçланса çӗрле 12 сехетчен пулса иртет.

66 статйа. Суйлав кунӗнче ирхине 6 сехетре Участкӑри суйлав комиççин председателӗ, унӑн членӗсем умӗнче, суйлав йешчӗкӗсене тата йышӑннӑ формӑпа тунӑ суйлавçӑсен списки пуррине тӗрӗслет, кун хыççӑн йешчӗксене хупать те комиççи пичечӗпе пичетлесе хурать, вара суйлавçӑсене сасӑ пама тытӑнма чӗнет.

67 статйа. Кашни суйлавçӑ хӑй сасӑлать, çавна тума сасӑламали çурта пырать, суйлавçӑсем сасӑ парасси вара конверт ӑшне хурса пичетленӗ суйлав бӳллетенне суйлав йешчӗкне йанипе пулса иртет.

68 статйа. Суйлав çуртӗнче бӳллетене çырса тултарма уйрӑм пӳлӗм уйӑраççӗ, унта сасӑланӑ вӑхӑтра, сасӑлакансемсӗр пуçне урӑх никамӑн та, çав шутрах участкӑри суйлав комиççи членӗсен те, пулма йурамасть; бӳллетене çырса тултармали пӳлӗме пӗр вӑхӑтрах темиçе суйлавçӑ кӗртес пулсан, пӳлӗме хӑмасемпе йе ширмӑсемпе пӗр вӑхӑтра миçе суйлавçӑ кӗртнӗ хисеп тӑрӑх пӳлсе уйӑрмала

69 статйа. Суйлав çуртне пынӑ суйлавçӑ участкӑри суйлав комиççин секретарне йе паспорт, йе колхоз кӗнеки, йе профсойуз билечӗ, йе вӑл камне пӗлтерекен урӑх удостоверени кӑтартать, вара суйлавçӑсен списки тӑрӑх тӗрӗсленӗ тата суйлавçӑсен спискинче паллӑ тунӑ хыççӑн, йышӑннӑ образецлӑ суйлав бӳллетенӗ тата конверт илет.

70 статйа. Суйлав çуртне çак „РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положенин" 16-мӗш статйи тӑрӑх, „сасӑлама права паракан удостоверенипе" пынӑ çынсене Участкӑри суйлав комиççийӗ уйрӑм спискӑ çырса пырать, ӑна суйлавçӑсен списки çумне хураççӗ.

71 статйа. Суйлавçӑ, суйлав бӳллетенӗсене çырса тултарма уйӑрнӑ пӳлӗмре, суйлав бӳллетенӗнче хӑй камшӑн сасӑлать, çав кандидатӑн хушаматне хӑварать, ыттисене хуратса хурать, бӳллетене конверт ӑшне хурса çыпӑçтарса, суйлавçӑ Участкӑри суйлав комиççийӗ вырнаçнӑ пӳлӗме куçать те, суйлав бӳллетенӗ хунӑ конверта суйлав йешчӗкне йарать.

72 статйа. Хутла пӗлмен пирки йе пӳ-çири мӗнле те пулин ситменлӗх пирки хӑйсем тӗллӗн суйлав бӳллетенне çырса тултарма пултарайман суйлавçӑсем, суйлав бӳллетенне çырса тултармали пӳлӗме кирек хӑш урӑх суйлавçа та суйлав бӳллетенне çырса тултарма чӗнсе кӗртме пултараççӗ.

73 статйа. Суйлав çуртӗнче сасӑ панӑ вахӑтра суйлав агитацине тума йурамасть.

74 статйа. Суйлав çуртӗнчи йӗркелӗхшӗн комиççи председателӗ ответлӑ пулса тӑрать, унӑн распорйаженийӗсем унта пынӑ çынсемшӗн пуриншӗн те обйазателлӑ.

75 статйа. Суйлав кунӗнче çӗрле 12 сехетре Участкӑри суйлав комиççин председателӗ сасӑсем парасси пӗтнӗ тесе пӗлтерет, вара комиççи суйлав йешчӗкӗсене уçма тытӑнать.

VIII-мӗш сыпӑк

Суйлав резуљтачӗсене палӑртасси

76 статйа. Участкӑри суйлав комиççийӗ сасӑсене шутлакан çуртра, сасӑсене шутланӑ чухне, общчествӑлӑ организацисен тата ӗççынни общчествисен йатарласа полномочи панӑ представителӗсен, çавӑн пекех тата пичет представителӗсен пулма права пур.

77 статйа. Участкӑри суйлав комиççийӗ, йешчӗксене уçса, панӑ конвертсен хисепне сасӑлама хутшӑннӑ çынсен хисепӗпе танлаштарса тӗрӗслесе тухать те, тӗрӗсленин резуљтачӗсене протокола çырса хурать.

78 статйа. Участкӑри суйлав комиççин председателӗ конвертсене уçать те, Участкӑри суйлав комиççин мӗн пур членӗсем умӗнче кашни бӳллетен тӑрӑх сасаланин резуљтачӗсене каласа парать.

79 статйа. Депутата суйлама тӑратнӑ кашни кандидат пуçне комиççи секретарӗ тата Участкӑри суйлав комиççин çав ӗçе тума полномочи панӑ членӗсем 2 екземпљар шутлав листи çырса пыраççӗ.

80 статйа. Бӳллетенӗсене чӑн мар тесе шутлаççӗ:

а) йышӑнман образецлисене тата йышӑнман тӗслисене;

б) конвертсӑр те йышӑнман образецлӑ конвертра панисене;

в) депутата суйламали хисепрен ытларах кандидатсем панисене.

81 статйа Суйлав бӳллетенӗ тӗрӗсси пирки иккӗленӳ тухсан, ыйтӑва участкӑри суйлав комиççи сасӑласа татса парать, ун çинчен протоколра паллӑ тӑвать.

82 статйа. Участкӑри суйлав комиççийӗ сасӑлавин протоколне йышӑннӑ формӑ тӑрӑх икӗ екземпљар çырать, вӗсем çине участкӑри суйлав комиççи членӗсем пурте, çав шутра председателӗпе секретарӗ обйазателљнӑ, ал пусаççӗ.

83 статйа. Сасӑлани çинчен çырнӑ протоколра участкӑри суйлав комиççин çаксене кӑтартмала:

а) сасӑ пама пуçланӑ тата парса пӗтернӗ вӑхӑта;

б) суйлавçӑсен списки тӑрӑх сасӑ панӑ суйлавçӑсен хисепне;

в) „сасӑлама права паракан удостоверени" тӑрӑх сасӑ панӑ суйлавçӑсен хисепне;

г) панӑ конвертсен хисепне;

д) участкӑри суйлав комиççине панӑ зайавленисемпе жалӑбасенче мӗн çинчен каланисене кӗскен çырнине тата участкӑри суйлав комиççи йышӑннӑ решенисене;

е) кашни кандидатшӑн панӑ сасӑсене шутланин резуљтачӗсене.

84 статйа. Сасӑсене шутласа пӗтернӗ тата протокол çырнӑ хыççӑн, комиççи председателӗ комиççин мӗн пур членӗсем умӗнче сасӑланин резуљтачӗсене каласа парать.

85 статйа. Сасӑлани çинчен участкӑри суйлав комиççийӗ çырнӑ протоколӑн пӗр екземпљарне, РСФСР Аслӑ Советне депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсен шутлав листисен икӗ екземпљарӗпе пӗрле нарочнӑйпа 24 сехет хушшинче РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Округри суйлав комиççине йараççӗ.

86 статйа. Участкӑри суйлав комиççи председателӗн суйлав бӳллетенӗсене пурне те (чӑннисене уйрӑмӑн, тата чӑн мар тесе йышӑннисене уйрӑмӑн) участкӑри суйлав комиççин пичечӗпе пичетлесе хумала та, сасӑлани çинчен çырнӑ протоколӑн иккӗмӗш екземпљарӗпе пичете сыхласа усрама: хуласенче—ӗççынни депутачӗсен хула Советне; районсене пайланса тӑракан хуласенче—ӗççынни депутачӗсен район Совечӗсене; йалти вырӑнсенче—ӗççынни депутачӗсен районри Совечӗсене памала.

87 статйа. Ӗççынни депутачӗсен Совечӗсем суйлав бӳллетенӗсене çав округ депутачӗсен мандачӗсене РСФСР Аслӑ Совечӗ çирӗплетиччен сыхласа усрама тивӗç.

88 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйлакан Округри суйлав комиççийӗ сасӑсене Участкӑри суйлав комиççийӗсем тӑратнӑ протоколсем тӑрӑх шутласа тухать.

89 статйа. Округри суйлав комиççийӗ сасӑсене шутлакан çуртра, сасӑсене шутланӑ чухне, общчествӑлӑ организацисен тата ӗççынни общчествисен йатарласа полномочи панӑ представителӗсем, çавӑн пекех тата пичет представителӗсем пулма права пур.

90 статйа. Кашни кандидат пуçне Округри суйлав комиççийӗ икӗ екземпљар шутлав листи çырса пырать, унта депутата суйлама тӑратнӑ кашни кандидат илнӗ сасӑсен хисепне паллӑ тӑваççӗ.

91 статйа. Округри суйлав комиççийӗ сасӑлани çинчен икӗ екземпљар протокол çырать, вӗсене Округри суйлав комиççи членӗсем пурте, çав шутра председателӗпе секретарӗ, обйазателлӑ алпусаççӗ.

92 статйа. Округри суйлав комиççин протоколӗнче çаксене кӑтартмала:

а) Округри суйлавçӑсен пӗтӗм хисепне;

б) сасӑлама хутшӑннӑ суйлакансен пӗтӗм хисепне;

в) депутата суйламали кашни кандидатшӑн панӑ сасӑсен хисепне;

г) Округри суйлав комиççине панӑ зайавленисемпе жалӑбасенче мӗн çинчен каланисене кӗскен çырнине тата Округри суйлав комиççийӗ йышӑннӑ решенисене.

93 статйа. Сасӑсене шутласа тухнӑ хыççӑн 24 сехетрен кайа хӑвармасӑр РСФСР Аслӑ Советне суйламали Округри суйлав комиççи председателӗ, протоколӑн пӗрремӗш екземпљарне шутлав листисемпе пӗрле, пичетлесе нарӑчнӑй урла Тӗп суйлав комиççине йама тивӗç.

94 статйа. РСФСР Аслӑ Совечӗн депутатне суйламали кандидат абсољутлӑ ытларах сасӑ илни, урӑхла каласан, округра панӑ, чӑн тесе йышӑннӑ мӗн пур сасӑсен çуррине ытларах илни, суйланнӑ шутланать.

95 статйа. Протокола алӑ пуснӑ хыççӑн, РСФСР Аслӑ Советне суйламали Округри суйлав комиççин председателӗ суйлавсен резуљтачӗсене каласа парать те, РСФСР Аслӑ Советне депутата суйланнӑ кандидата суйланни çинчен удостоверени парать.

96 статйа. Кандидатсенчен пӗри те абсољутлӑ ытларах сасӑ илмен пулсан, тивӗçлӗ Округри суйлав комиççийӗ çавӑн çинчен протоколра паллӑ тӑвать те: Тӗп суйлав комиççине пӗлтерет тата кунпа пӗр вӑхӑтрах, чи нумайрах сасӑ илнӗ икӗ кандидата тепӗр хут баллотировкӑ тӑвасси çинчен пӗлтерет, çавӑн пекех тата çӗнӗрен баллотировкӑ тумали куна, суйлавсен пӗрремӗш турӗ иртнӗ хыççӑн икӗ ернерен кайа хӑвармасӑр, палӑртса хурать.

97 статйа. Округра панӑ сасӑсен хисепӗ çав округри сасӑлама права пур суйлавçӑсен çурринчен сахалтарах пулсан, РСФСР Аслӑ Советне суйламали Округри суйлав комиççийӗ çавӑн çинчен протоколра уйрӑмӑн паллӑ тӑвать те, çийӗнчех Тӗп Суйлав Комиççине пӗлтерет, кун пек чухне вара Тӗп Суйлав Комиççийӗ пӗрремӗш суйлавсем хыççӑн икӗ ер ерен кайа хӑвармасӑр çӗнӗрен суйлав иртермеле тӑвать.

98 статйа. Депутата суйламали кандидатсен тепӗр хут баллотировкине, çавӑн пекех тата чӑн мар тесе йышӑннисен вырӑнне çӗнӗ суйлавсене пӗрремӗш суйлавсем валљли тунӑ суйлавçӑсен спискисем тӑрӑх, тата пӗтӗмӗшпех çак „РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положени" тӑрӑх туса иртереççӗ.

99 статйа. Депутат РСФСР Аслӑ Совечӗн составӗнчен тухса ӳксен, РСФСР Аслӑ Совечӗн Президиумӗ 2 ернелӗ срукра, анчах депутат РСФСР Аслӑ Совечӗн составӗнчен тухнӑ хыççӑн 2 уйӑхран кайа хӑвармасӑр, РСФСР тивӗçлӗ суйлав округӗнче çӗнӗ депутат суйлавне иртермели срука палӑртать.

100 статйа. Кирек кама та, вӑл пусмӑрласа, улталаса, йунаса йе подкуп туса РСФСР гражданинне унӑн РСФСР Аслӑ Советне суйлас тата суйланас правине пурнӑçа кӗртме чарса тӑрать пулсан, 2 çул таран срукла хупса лартаççӗ.

101 статйа. Советӑн ӗçлӗ çыннине йе суйлав комиççин членне, суйлавра суйа документсем тунӑшӑн йе сасӑсене йурийех тӗрӗс мар шутланӑшӑн,—3 çул таран срукла хупса лартаççӗ.

Вулав çурчӗ бољшевикла агитацин вучахӗ пулмала

Куљтурӑ фронтӗнче ӗçлекенсем СССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлама хатӗрленнӗ чух агитаторсем, суйлав комиççи членӗсем, доверенӑйсем пулса ӗçлерӗç. Анчах та суйлав кунӗ иртнӗ хыççӑн, агитаципе пропагандӑ ӗçӗ йӑвашланса пуçларӗ.

Çӗмӗрле районӗнчи чылай вулав çурчӗсен пуçлӑхӗсем ку тӗлӗшпе çителӗклӗ ӗçлесе пыраймаççӗ-ха. Пысӑк Улхаш, Йегоркин, Худар вулав çурчӗсен пуçлӑхӗсен ӗç планӗ те çук. Хӑйсен ӗçӗсем çинчен отчотсем тумаççӗ. Вулав çурчӗ çумӗнче организациленӗ кружоксем ӗçлемеççӗ, стена хаçачӗсем тухса тӑмаççӗ.

Тугасри вулав çурт пуçлӑхӗ Петров вулав çуртне пӗтӗмпех йапӑхтарса йанӑ. Вӑл вулав çуртне çӳремест, кӗн кесене хӑй патӗнче усрать. Çавӑн пирки колхозниксемпе йединоличниксем кӗнекесем илсе вулаймаççӗ. Йалсовет вулав çуртне хаçат журналсем çыранса памасть.

Пысӑк Улхашра хутла пӗлменнисем 192 çын, хутла сахал пӗлекенсем 224 çын шутланаççӗ. Вӗсене вӗрентме 22 учител уйӑрнӑ, анчах нихӑшӗ те ӗçе тытӑнман. Çавӑн пекех хутла пӗлменнисене вӗрентес ӗç Тугас йалсоветӗнче те йапӑх. Хутла пӗлменнисене вӗрентес ӗçпе вулав çурчӗн пуçлӑхӗсем те интересленмеççӗ.

Вулав çурчӗсем бољшевикла агитаци вучахӗ пулса тӑмала. Халӗ, уйрӑмӑнах Аслӑ Совет Çессийӗ ӗçӗсене тата ВКП(б) Тӗпкомӗн йанвари пленумӗн решенисене ӑнлантарса парассине вӑйлатмала. Сталинла виççӗмӗш пйатилеткӑн пӗрремӗш çулӗнчи çуракине хатӗрленнӗ май, агрономсемпе зоотехниксен колхозниксемпе каласусем туса иртермеле. РСФСР тата Чӑваш АССР Аслӑ Совечӗсене суйлама хатӗрленесси тавра массӑна организацилесси вулав çурчӗсен халљхи вӑхӑтри пӗртен-пӗр пысӑк задачи пулса тӑмала.

П. Йавский.

Колхоз клубӗнче

Кӑшаркассинчи (Çӗрпӳ р-нӗ) „Пионер" колхоз çумӗнчи драмкружок иккӗмӗш çул ӗнтӗ лайӑх ӗçлесе пырать. Кружока Захаров йулташ йертсе пырать.

Кӑçал колхоз клуб лартрӗ. Халӗ ӗнтӗ кашни ернерех драмкружок членӗсем колхоз клубӗнче спектаклљ лартаççӗ.

Ан. Иванов.

Çӗнӗ руководителсем

ТРАК. Суйлав кампанийӗ вӑхӑтӗнче коммуниссемпе партире тӑманнисен блок çӗнтерӳвӗшӗн, Ленин—Сталин ӗçӗшӗн, халӑх интересӗшӗн çине тӑрса ӗçленӗ çынсене йертсе пырас ӗçсене лартаççӗ. Кушар Йунтапа участкинчи суйлав комиççи председателӗ пулнӑ Илйин Григорийе районри çӗрӗç пайӗн заведуйушчийӗн заместителне лартнӑ. Илйин йулташ 2 çул Илйич йачӗпе тӑракан колхоз председателӗ пулса ӗçленӗ. Вӑл колхоз районра малта пыракан колхозсен шутӗнче тӑнӑ. Илйич йачӗпе тӑракан колхоз 1937 çулта пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илчӗ.

Национаљнӑççен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗçлекен Çӗрпӳ округӗн суйлав комиççи членӗ пулнӑ Йаковлев Ивана районри çулйӗр пайӗн заведуйушчине лартнӑ. Йаковлев йулташ унччен Типçырма йалсовет председателӗ пулса ӗçленӗ.

Карай участкинчи суйлав комиççин председателне Илйин Спиридон йулташа социаллӑ пулӑшун районри инспекторне лартнӑ. Çавӑн пекех участкӑри суйлав комиççийӗн членӗ пулса ӗçленӗ Н. Михайлов йулташа Çавалçырма йалсовет председателне суйланӑ, Агитаторсенчен: Иефимов йулташа халӑх сучӗн исполнителне лартнӑ, Ф. Григорйева, П. Йефремов, А. Николайев йулташсем халӗ колхоз председателӗсем пулса ӗçлеççӗ. Суйлав комиççисенче ӗçленӗ Л. Спиридонов, А. Степанова, Клементйев йулташсене аслӑ шкулсене вӗренме йанӑ.

И. Хатайевский.

Малта пыракан колхозсенче

(Йӗтӗрне районӗ).

Тури-Ачакри „Крестьянская газета" колхоз кӑçал гектартан вӑтам шутпа 35 центнер тӗштырӑ илме обйазателстӑ пачӗ. Çавна пурнӑçлама вӗсем агротехникӑла ӗçсен планне турӗç. Çав плана тунӑранпа 20 кун хушшинче 700 лав тислӗк, 600 лав торф, 330 лав йушкӑн уйа кӑларчӗç. 270 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 584 лав кӗл пухса хатӗрленӗ. И. Афанасйев, Малов И., Васийлйев Р. колхозниксем çак кунсем хушшинче лапша тавраш ӗсене, урапасене т. ыт. йусаса ӗçе йурӑхлӑ туса хатӗрленӗ.

Филиппович Николайев тимӗрçсем йалхуçалӑх машинӗсене йусаса пӗтерчӗç.

Колхозри Йажейкин йертсе пыракан стахановла III-мӗш бригадӑ кӑçал гектартан вӑтам шутпа 45 центнер тӗштырӑ туса илессишӗн кӗрешет. Бригадӑ халљ пӗтӗм вӑрлӑхсене суртласа кунӑ. Халӗ вӗсем „Виктори" пӑрçа вӑрлӑхне алӑпа суртлама тытӑнчӗç.

Йанварӗн 18-мӗшӗнче Пољанкӑри Киров йачӗпе тӑракан колхоз „Крестьянская газета" колхозпа социалисӑмла ӑмӑрту договӑрӗ туса çирӗплетрӗ.

Нумайах пулмасть Мӑн-Чурашри „Прогресс" колхоз членӗсем Тури-Ачак колхозӗ мӗнле ӗçленипе пырса паллашрӗç. Халљ вӗсем те ачаксен ӗç тӗслӗхӗсемпе усӑ курса лайӑх ӗçлеме тытӑнчӗç.

Ник. Цветков.

* * *

Кӑтан йалсоветне кӗрекен „Пионер" колхоз февралӗн 3-мӗш кунне 3000 лав тислӗк, 700 лав йушкӑн уйа кӑларнӑ. Пайанхи куна колхоз вӑрлӑхсене суртласа пӗтернӗ. Йалхуçалӑх машинисене пӗтӗмпех йусаса хунӑ.

„Пионер" колхоз çуракине хатӗрленессипе „Хӗрлӗ çӑлтӑр" колхозпа ӑмӑртса ӗçлет. Ӑмӑрту договӑрӗ тӑрӑх „Пионер" колхозпа „Хӗрлӗ çӑлтӑр" колхоз çуракине февраљ уйӑхӗнче пӗтӗмпех хатӗрленсе çитмеле. Колхозпа колхозӑн ӑмӑрту договӑрӗ мӗнле пурнӑçа кӗрсе пынине пӗлме тесе февралӗн 1-мӗшӗнче договӑрсене тӗрӗслесе тухрӗç.

Колхозра агрокружок та ӗçлеме тытӑнчӗ. Ку ӗçре учител А.Степанов вӗрентет. Колхозниксем кружока тӑрӑшса çӳреççӗ. Çуракине хатӗрленес ӗçре çитменлӗхсем те пур. Бригадӑпа бригадӑ, звенопа звено, колхозникпа колхозник социалисӑмла ӑмӑртса ӗçлессине организацилемен.

Мих. Моиçейев.

Тутаркас районӗнче çуракине начар хатӗрленеççӗ

Тутаркас районӗн кӑçал çуракинче 23.525 пин гектар суртлӑ вӑрлӑх акмала. Ку участкӑна акма 37.960 центнер суртлӑ вӑрлӑх кирлӗ.

Çав шутран февралӗн 5-мӗшне 9.475 центнер çеç трийер витӗр суртласа кӑларнӑ.

Çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе Тукшикри „Парижская Коммуна", Пушкӑртри „Çӗнӗ çул", Йуманлӑхри „КИМ", Йанӑмри „Çӗнӗ пурнӑç" колхозсем уйа тислӗк тата торф кӑларнисӗр пуçне, нимӗнех те туман. Вӑрлӑхсене суртласа пӗтермен, йалхуçалӑх машинисене, лаша кӳлмели тавраш ӗсене йусаса пӗтермен.

Вӑрлӑх пахалӑхне — акма йурӑхлипе йурӑхсӑррине тӗрӗслес ӗç те йапӑх пырать.

Районран йаракан уполномоченнӑйсем колхозсене пырса кӗрсен, çуракине хатӗрленни çинчен сводкӑ илеççӗ те çуракине хатӗрленнипе тӗрӗслемесӗрех колхозран тухса вӗçтереççӗ.

Платкассинчи Молотов йачӗпе тӑракан колхоз панӑ сводкӑ тӑрӑх, акмали вӑрлӑха пӗтӗмпех суртланӑ шутланать. Çӗрӗç Халӑх Комиссариачӗн агрономӗ Лукин йул. тӗрӗслесе тухнӑ хыççӑн, вӑрлӑх пачах акма йурӑхсӑр пулни палӑрчӗ, суртлӑ вӑрлӑха суртсӑр вӑрлӑхпа хутӑштарса йанӑ.

Çавӑн пекех вӑрлӑх улӑштарасси те кунта йулса пырать, 4050 центнер вырӑнне 950 центнер çеç улӑштарнӑ.

Районра йалхуçалӑх машинисене йусассине те тивӗçлипе пуçласа йаман. Нумай колхозсен тимӗрçӗ çук. Чылай колхозсенче машинӑсене ӗç пӗтерсен ӑçта лартнӑ, çавӑнтан пуçтарса кӗмен.

Кунта агротехникӑна вӗренес ӗçе те пуçарса йаман.

Райçӗрӗç пайӗ ӳрӗк-сӳрӗк ӗçлесе пынипе район çуракине хатӗрленессинче йулса пырать. Тутаркас районӗн çуракине хатӗрленес ӗçе чылай вӑйлатма кирлӗ.

Н. Михейев.

Тырпулпа тупӑшсене халљ те валеçмен

Куславкка районӗнчи Каганович йачӗпе тӑракан колхозра тырпулсене тата 1937 çулхи тупӑшсене халљ те валеççе пӗтермен. Ӗçкунӗсемшӗн илмели тырра колхозниксем илеймеççӗ. Çаксем, паллах, колхоз руководствинчен килеççӗ. Правлени председателӗсем час-часах улшӑнса тӑраççӗ, бригадирсем те пӗр икӗ ерне ӗçлесенех улшӑнаççӗ.

Колхозра социалисӑмла пурлӑха тирпейлӗ тыткаламанни те пур. Ревизиљ комиççийӗ те тӑрӑшса ӗçлемест. Ревизи тӑвас ӗç çийелтен çеç пулса иртет.

Ӗçсем çапла пулса пынипе çуракине хатӗрленес ӗç те колхозра пит начар. Вӑрлӑхсене те суртласа тасатман, плугсене те йусаман. Кӗскен каласан, 1938 çулти вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешни пачах çук. Районри организацисем, чи малтанах çӗрӗç пайӗ, хутшӑнмасӑр колхоз ӗçне йӗркелесе йама йӑвӑр кунта.

Атлаш.

Çамрӑк кадрсене пулӑшмала

Йӗпреç райкомолӗ çак йулашки уйӑхсенче комсомолецсене йертсе пырас пысӑкрах ӗçсене куçарса лартас тӗлӗшпе хӑшпӗр палӑрмала ӗçсемех тунӑ. Чурачӑкри туллимар вӑтам шкулти çамрӑк учителе-комсомолеца Шипатов йулташа районри çутӗçпайӗн пуçлӑхӗ пулса ӗçлеме илнӗ. Районра малта пыракан йалсовечӗсенчен пӗри пулнӑ Хирти Марат йалсовет председателне Комиссаров йулташа райӗçтӑвкома илнӗ. Вӑл халљ райӗçтӑвкомра кадрсен пайӗн пуçлӑхӗ пулса ӗçлет. В. Константинов комсомолеца Ентрийел, Ухтйаков комсомолеца Тури Клешкасси йалсовечӗсен председателӗсене суйланӑ. Çавӑн пекех Чангин, Петров комсомолецсем те райӗçтӑвкома илнӗ çӗнӗ работниксем.

Анчах çаксем пурте çамрӑк кадрсене йертсе пырас ӗçсене куçарса лартас тӗлӗшпе тунӑ пуçламӑш ӗçсем çеç-ха. Райкомолӑн комсомолецсене хуçалӑхпа совет тата куљтурӑ организацисене ӗçлеме куçарас йенӗпе татах та çине тӑрса ӗçлемеле.

Çӗнӗ ӗçсене куçарса лартнӑ комсомолецсем райкомол йенчен пысӑк пулӑшу кӗтеççӗ. Çавӑнпа та райкомол умӗнче тӑракан пысӑк задачӑ — вӑл çамрӑк кадрсене куллен пулӑшса, вӗсене ӗçлеме хӑнӑхтарса пырасси пулать.

М. М-в.

Çутӗç пайӗн çавӑрӑнса пӑхма вӑхӑт

Шӑртанта (Йӗпреç р.) суккӑрсен шкулӗ ӗçлет. Вӑл шкулта 15—20 çынрӑн кайа мар вӗренмеле. Пайан куна шкула вӗренекенсене пухса çитермен, унта 8 çын кӑна вӗренетха. Шкул пуçлӑхӗ Амуров й. каланӑ тӑрӑх, çав шкулта вӗренмели çынсем Йӗпреç районӗнчех çителӗклӗ таран пур. Анчах вӗсене пурне те шкула йавӑçтарса вӗрентес пирки районри çутӗç пайӗ çителӗклӗ таран ӗçлемест. Çавӑнпа та ӗнтӗ вӗренмели çынсемех шкул тулашне тӑрса йулаççӗ.

Шкулта вӗренӳпе воспитани ӗçе те начар. Физикӑ, географи тата грамматикӑ вӗренме учебниксем çитмеççӗ. Вӗренекенсем хушшинче хаçат-журналсем вуласа пама, каласусем иртерме уйрӑм çынсене уйӑрман. Райкомол та, районри çутӗç пайӗ те вӑл çынсене уйӑрса паман. Çавӑнпа та вӗренекенсен хушшинче куљтурӑлӑ-массӑлӑ тата политикӑлӑ ӗçсене никам та туса пымасть.

Районри çутӗç пайӗн ку шкул çине çавӑрӑнса пӑхма вӑхӑт ӗнтӗ.

М. М-в.

ПОЙĂС КИЛЕТ

Чăваш ĕçсыннисем тахçанах тата чĕререн кĕтнĕ ĕмĕт—Канашпа Шупашкар хушшинче чукунçул тăвасси пурнăçа кĕрсе пырать. Чукунçул Шупашкарала килет. Пайанхи куна 44 километр тăршшĕ лини хывнă. Лини хывакан бригадăсем хăвăрттăн малала кайаççĕ. Çĕр ĕçне тăвасси те вĕçленсе пырать. Лини хывакан бригадăсем ĕçленĕ вырăнтан пуçласа Шупашкар станцине ситиччен çĕр ĕçне тăвасси Ункă шывĕ тата тепĕр икĕ пĕчĕк çырмасенче çес йулнă.

Çак чукунçул хамăр республик хуçалăхне малашне çĕклесех пырас ĕçре çав тери пысăк вырăн йышăнасси пуриншĕн те паллă. Вăл республик центрне районсемпе, çавăн пекех совет çĕршывĕнчи ытти хуласемпе çыхăнса тăма, промышленнăç строителствине вăйлатма май парать. Çавăнпа çĕнĕ чукунçула пĕтĕм республик тăвать.

Трак районĕнчи колхозниксем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççине Чăваш республикĕнчен кайнă депутатсем йанă çырăва сÿтсе-йавнă май, строителствăра ĕçлеме массăлăн тухрĕç. Строителствăна тухнă колхозниксем хăйсем хушшинче ăмăрту пуçарса йачĕç. Димитров йачĕпе тăракан колхозран пынă Филиппов, Владимиров бригадисем ĕçе тĕрĕс организациленипе çын пуçне куллен 3,5 кубла метр çĕр чавса купаласа пычĕç. Пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен колхозсен хисепĕ кунсерен ÿссе пычĕ. 13 кун ĕçленĕ хыççăн Трак районĕнчи колхозниксем Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Хĕрлĕ йалав илнĕ хыççăн колхозниксен ĕç хастарлăхĕ тата та ÿсрĕ. Хăйсен планне тултарнă колхозсем те строителствăра ĕçлеме йулчĕç. Çапла ĕçленипе Трак районĕнчи колхозсем февралĕн 4-мĕшĕ тĕлне 3 пин кубла метр йур тасатса 6 пин кубла метр çĕр чавса купаласа 53-мĕш километрти çĕр ĕçне пурнăça кĕртрĕç. Колхозниксене ĕçлеме организацилессине, вĕсем хушшинче кулÿтурăлă-массăлă ĕçе йĕркелессине парти райкомĕпе райĕçтăвком йертсе пынипе тунă. Парти Трак райкомĕпе райĕçтăвком чукунçул строителствине пулăшас йĕнĕпе пысăк ĕçсем тунă.

Строителствăна активлăн хутшăнса пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен колхозсем Çĕрпÿ, Ишлей тата ытти районсенче те нумай. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем хăйсен обйазателствине çулахи вăхăтрах пурнăçланă. Куславккапа Сĕнтĕрвăрри тата Канаш, Шăнкăртам районĕсенчи нумай колхозсем пысăк пулăшу панă. Халÿхи вăхăтра Çĕрпÿ районĕнчи „Ĕмĕт“, Ишлей районĕнчи „Верный путь“, „Комбайн“, „Красная звезда“ колхозсем пысăк хаваслăхпа ĕçлеççĕ.

Стахановла ĕçлекенсем лини хывнă çĕрте те сахал мар. Ĕçре ÿссе çирĕпленнĕ С. Тарасов йертсе пыракан комсомолецсен бригади кунран-кун ÿсĕмсем туса пырать. Унăн бригади—стахановла бригада. Бригадă членĕсем пурте линийе Чижов инженер меслечĕпе хывма вĕренсе çитнĕ. Бригадă ĕçĕн тĕп никĕсĕнче пысăк ăсталăх, ответлăх. чукунçул тăвасси пĕтĕм чăваш халăхĕн ĕçĕ пулса тăнине тĕплĕн ăнланса илни тăрать. Бригадă членĕсем хăйсем стахановла ĕçленипе ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыни — Чăваш республик чисне çĕклени. унăн хуçалăхне хăвăрттăн малала йарас. пуйанлăхне çĕклес çулпа малала çирĕп утăм туни пулни çинчен лайăх ăнланса илнĕ. Çавăнпа вĕсем пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ.

Нумай пулмасть, Родионов бригади малти вырăна тухрĕ. Унăн бригади нормăна 200 процент тултарать. Тракторис Григорий Фасхутдинов, прийомщик Василий Илтерков тата нумай чаплă çынсем ÿссе çитĕнчĕç чукунçул строителствинче.

Лини хывнă çĕрте ĕçлекен рабочисемпе инженерла-техникла работниксем лини хывассине мартăн малтанхи вунăкунлăхĕнче пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе çитерме пулчĕç. Кăна пурнăçа кĕртме пирĕн условисем çителĕклĕ. Пурнăçа кĕртме пултарнине кăтартакан тĕслĕхсем те сахал мар. Вĕсем—стахановецсем, ударниксем, лайăх ĕçлекен колхозниксем.

Чукунçул строителстви руководителĕсен, стройкăри работниксен чыслă задачи — лайăх ĕç опычĕсене пур çĕре те сарса, ыттисене те малти вырăна кăларасси пулать. Кашни рабочийе. вĕсене валÿçи ĕçлеме лайăх условисем туса парас тăрăх. стахановла ĕçлекен тумала. Районри организацисен строителствăна кулленхи ĕçре пулăшса нымала.

Малта пыракансенчен пример илсе ĕçлет

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул линине хывнă çĕрте ĕçлекен Родионов бригади ĕлĕкрех начар ĕçлесе пынă. Нумайах пулмасть, ку бригадă саланса кайас патнех çитнĕччĕ. Анчах та Родионов йулташ хăйĕн бригадинчи рабочисем хушшинче массăлă ĕçе туса пырса, хăйĕн организаторла пултарулăхне кăтартрĕ. Халĕ унăн бригади малта пыракансен шутĕнче тăрать, кашни кунах шпалсене тийессипе нормăна 200 процент тултарать. Рабочисем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Родионов рабочисене йаланах ĕçре пулăшса, кăтартса пырать. Дисциплинă йĕнчен те бригадăра çирĕп йĕрке тунă.

Февралÿ уйăхĕнче унăн бригади татах та лайăх ĕçлеме татăклă обйазателствăсем илсе, Полÿаков йулташ йертсе пыракан бригадăна ăмăртăва чĕнчĕ.

Викторов.

КАНАШ—ШУПАШКАР ЧУКУНÇУЛ СТРОИТЕЛСТВИ

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: шурă пăнчăсемпе паллă тунă йĕр—чукунçул мĕн чухлĕ хывнине, хура йĕр—чукунçул хывмалине кăтартать. Пайанхи куна чукунçула хывса Именкасси (Трак р-нĕ) патне çитнĕ.



Ишлей районĕ хăвăртлăхсене чакармала мар

Ишлей районĕнчи чылай колхозсем Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула хăвăртрах туса пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах Чаганарти „Верный путь“, „Комбайн“, „Красная звезда“, „Çĕнĕ пурнăç“ тата ытти колхозсем йулашки кунсенче пысăк хастарлăхпа ĕçлеме пуçларĕç. „Верный путь“ колхозри колхозниксем 7 кун хушшинче 100 кубла метр тăпра чавса купаланă. Иван Сергейев, Клавдийа Кожевникова комсомолецсем кашни кулленех хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлеççĕ.

„Комбайн“, „Осоавиахим“ колхозсенчен килнĕ комсомолецсен бригадисем те аван тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Анчах пĕтĕмĕшпе илсен чукунçул çинче ĕçлесси районта çителĕксĕр пырать-ха. Февралĕн 2-мĕшпе 5-мĕш хушшинче иккĕмĕш участкăра тăпра чавса купалас ĕçре ĕçвăйĕ чакса пычĕ. Февралĕн 2-мĕшĕнче районта 77 çын лашапа, 231 çын çуран ĕçленĕ пулсан, 4-мĕшĕнче 54 çын лашапа 167 çын çуран ĕçленĕ. 5-мĕшĕнче ĕçлекенсен шучĕ татах чакнă.

Ĕç тухăçлăхĕ чакни рабочисене ĕçлеме çителĕклĕ таран услови туса паманнинчен килет. Акă сăмахран 4-мĕшĕнче ĕçлеме пынă колхозниксене шăннă çĕре ватса паман пирки пĕр пĕчĕк вырăнтах 110—120 çынна ĕçлеме тиврĕ. Тăпра тăкмали вырăна малтанах тасатса хуманни те тăпра турттарас ĕçре пысăк чăрмав кÿчĕ.

Столовăй та çителĕксĕр ĕçлет. Апатланма пынă çынсен чылай вăхăт хушши черетре тămала. Апат пахалăхĕ начар. Хăшпĕр чухне вĕретнĕ шывпа вĕри апат та пулмасть.

Гер. Шчербаков.

Икшер нормă тултараççĕ

ШĂХАСАН. Малтикас Шĕкĕрти Сталин йачĕпе тăракан ертел членĕсем иртнĕ çулта тунă çитĕнÿсене çирĕплетсе кăçалхи çул татах та лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Акă, Д. Йефимов иртнĕ çулта 9 уйăх хушшинче 1600 чăпта çапас вырăнне 3.340 стандартлă чăпта çапса плана 208 процент тултарчĕ. Ксенийа Михайлова та 2766 чăпта çапса кăларчĕ. Халĕ вĕсем йаланах нормăсене 200 процентран кайа мар тултарса ĕçлеççĕ.

Анчах чăптаçсем хушшинче кулÿтурăлă-массăлă ĕçе начар йĕркеленĕ. Чăптаçсем радио итлесшĕн, радио ĕçлемест. Биллиард та складрах выртать.

Д. Иванов.

Лини хывакан базăри рабочисен обйазателстви

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул линине хывнă çĕрте ĕçлекен рабочисемпе руководителсем хăйсен пухăвĕнче йанвар уйăхĕнчи ĕççене пахса тухса, февралÿ уйăхĕнче мĕнле ĕçлемелли çинчен сÿтсе-йаврĕç. Рабочисем хăйсен сăмахĕсенче чукунçул хывассине пысăк хăвăртлăхпа туса пĕтерме кирлине палăртса, хăйсем çине кашни кун 1950 метр лини хывма, пĕр простой тумасăр ĕçлеме обйазателствă илчĕç. Хăйсем пек ĕçлеме 31-мĕш №-лĕ машинлă çул станцинче ĕçлекенсене социалисăмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

Çавăнтах уйрăм бригадăсемпе стахановецсем пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухрĕç. Акă шпалсене тийекенсен бригади (бригадирĕ Полÿаков) сменăри нормăна 120 процентран кайа мар тултарса ĕçлеме пулчĕ. Унăн сменинче ĕçлекен Родионов йулташ нормăна 150 процент тултарма обйазателствă илсе, Ф. Степановпа К. Семенова ăмăртăва чĕнчĕ. Çавăн пекех линисене хытарнă çĕрте ĕçлекен Серов йулташ бригади те ĕçре брак тăвассине парах пĕтерме пулчĕ.

Çавăнпа пĕрлех рабочисем снабжени уйрăмне çителĕклĕ таран материал тăратма ыйтрĕç.

150-шар процент

Строителствăн виççĕмĕш участкинче ĕçлекенсем февралÿ уйăхĕнче лайăх ĕçлессипе ăмăрту пуçарса йачĕç. Бригадăсем пысăк тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Кунников йулташ бригади кулленхи нормăсене 150 процент таран тултарса ĕçлеме пуçларĕ. П. Майков стахановец йаланах 150 процентран кайа мар тултарса пырать.

К. Родионов.

Строителствă пĕтиччченех ĕçлеме пулаççĕ

ИШЛЕЙ. Шинер Тăрăнри „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз членĕсем чукунçул строителствинче 100 кубла метр вырăнне 145 кубла метр çĕр чавса купаларĕç.

Çакна шута илсе. райĕçтăвком колхоза 250 тенкĕ преми пачĕ. Колхозниксем чукунçул туса пĕтериччченех ĕçлеме пулаççĕ.

М. Галкина.

Малта пыракан промертелсене премилерĕç

Чăвашкулÿпромсойуз йĕнĕпе ĕçлекен Абаккассинчи, Шетмĕ Пуçĕнчи тата Карай Шуркари промертелсем йанвар уйăх планĕсене ытлашшипех тултарчĕç. Вĕсем стахановла йухăма лайăх йĕркеленĕ. Стахановецсем кайра пыракан кустарсене хăйсем пек ĕçлеме вĕрентсе тата пулăшса пыраççĕ.

Чăвашкулÿпромсойуз президиумĕ йанвар уйăх планне ытлашшипех пурнăçланăшăн Абаккасси промертел председателне Тимофейева, Шетмĕпуç ертел председателне Йермолайева тата Карайри промертел председателне Тенйайева кашнинех 250-шер тенкĕ укçа парса премилерĕ. Çавăнпа пĕрлех Чăвашкулÿпромсойуз çÿлте кăтартнă промертелсенчи стахановецсемпе ударниксене премилеме, кашни ертелех 500-шер тенкĕ укçа уйăрса панă.

1938 çулхи пĕрремĕш кварталта лайăх ĕçлекенсене премилеме Чăвашкулÿпромсойуз 11100 тенкĕ, унăн системине кĕрекен ертелсем 61.000 тенкĕ уйăрнă.

В Смелов.

Комсомолецсем партине кĕреççĕ

Вагонсем йусакан заводри комсомол организацийĕ çак кунсенче заводри стахановецсемпе ударниксене 14 çынна комсомол ретне илнĕ, 6 çынна ПСК(б)П кандидатне кĕме рекомендаци панă.

Çитес кунсенче чылай комсомолецсене парти ретне пама хатĕрлесе çитеретпĕр. Вĕсем политикăла пĕлÿпе çителĕклĕн хĕçпăшалланнă,—тет заводри комсомол комитет секретарĕ Темйанов йулташ.

Заводра çĕнĕ кадрсем хатĕрлесси тата çамрăк кадрсене ответлă вырăнсене лартасси саралсах пырать. Акă, М. Димитрийев, малтан комплектнăй бригадăн начаÿникĕ пулса ĕçленĕскер, халĕ цех начаÿникĕн заместителĕ пулса ĕçлет. П. Майоров стахановеца слесăртан вагонсен автотормозĕсене йусас тĕлĕшпе ĕçлеме мастăра куçарнă. Богомолова стоÿартан мастăра куçарнă, Никитина (ПСÇЛКС Канаш райком пленум членĕ тата ПСÇЛКС Обкомĕн членĕ) стоÿартан мастăра куçарнă, Титова токартан мастăра куçарнă.

Производствăра ĕçлекен 117 комсомолецран 43-шĕ стахановец тата 29-шĕ ударник. Вĕсенчен пĕрне, Темйаков йулташа, „Ударнику сталинского призыва“ значок парса парнеленĕ.

П. Архипов.

Çамрăк стахановцăсене комсомол организацийĕсем йенчен пулăшасси тата стахановла йухăма çамрăксем хушшинче сарасси çинчен

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн постановленийĕ

„Мускав хулипе Мускав облăçĕнчи фабриксемпе заводсенчи стахановцăсем чĕнсе калани“ пирки ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ 1938 çулхи декаберĕн 28 мĕшĕнче йышăннă решени Ленинла комсомолăн пĕтĕм организацийĕсем умне çамрăксемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатас тата çамрăксем хушшинче стахановла йухăма малала сарас задачă лартать. Çав вăхăтрах комсомолăн нумай организацийĕсен çак ĕçре палăрмалах пысăк йăнăшсем, çитменлĕхсем тата асăрхамасăр хăварнисем пур.

Пĕрремĕшĕнчен, комсомол комитечĕсемпе комсомол организацийĕсенчен питĕ нумайĕшĕ стахановла йухăмран, çамрăк стахановцăсемпе ĕçлессинчен айаккала пăрăнса тăраççĕ, ĕçе хай йухăмĕпе йараççĕ, çапла вара пурнăçран тата малта пыракан çамрăксенчен уйăрăлса кайаççĕ.

Комсомола хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсем, хăйсен тăшманла тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес шутпа, комсомолĕцсемпе çамрăксене воспитани парас тĕлĕшпе ĕçлессине стахановла йухăма сарассине хирĕç тăратнă.

Иккĕмĕшĕнчен, комсомол комитечĕсенчен нумайĕшĕ, çамрăк стахановцăсен пĕтĕм массине тимлĕн пăхмасăр тата пачах пулăшусăр хăварса, стахановла йухăма хутшăнассине уйрăм рекордсменсемпе кăна ĕçленипе, уйрăм рекордсем кăна хатĕрленипе, тĕрлĕрен парадлă слётсем ирттернипе хĕссе хураççĕ.

Нимĕн иккĕленмели те çук: рекордсем кирлĕ пире. Ĕç тухăçлăхне хăпартас ĕçре тата техникăпа усă курассинче çĕнĕ майсем уçса параççĕ вĕсем. Анчах чи кирли, çапах та, çамрăк стахановцăсен пĕтĕм массине пулăшассинче бригадăсĕн, участкăсен, сменăсен стахановла ĕçне организацилессинче пулать.

Виççĕмĕшĕнчен, чылай организацисенче социализмла ăмăртăвăн ленинла-сталинла принципĕсене,—вăл принципсем, талкăшпех çеклен тăвасшăн, малта пыраканнисен кайа йулаканнисене йулташла пулăшмали çинчен калаççĕ,—манаççĕ.

Техминимума вĕренсех çитеймен çамрăк рабочисен çĕнĕ кадăрĕсене, çавнашкалах тата нормăна тултарса пырайман, брак тăвакан, оборудованине тирпейлĕ тытман çамрăк рабочисене те, комсомол комитечĕсем час-часах тимлĕн пăхмаççĕ, вĕсене пулăшусăр хăвараççĕ.

Тăваттăмĕшĕнчен, комсомол комитечĕсем техникăна вĕренессине организацилес, çамрăк стахановцăсен грамăтнăçĕпе культурине хăпартас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Комсомол организацийĕсен ĕçĕнчи çак пысăкран та пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсене чăтма çук, уйрăмăнах халĕ, ССРСоюзĕн Аслă Совет суйлавĕсем тата çак суйлавсенче коммунистсемпе партире тăманнисен халăх блокĕ çĕнтерни çамрăксен политикăлă тата производствăлă активлăхне çекленĕ условисенче, тӳсме çук вĕсене.

„Мускав хулипе Мускав облăçĕнчи фабриксемпе заводсенчи стахановцăсем чĕнсе калани пирки“ 1937 çулхи декаберĕн 27 мĕшĕнче ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă решенийе асра тытса, ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ çапла йышăнать:

1. ПСÇЛКС пĕтĕм организацийĕсем умне çамрăксене стахановла йухăма пур майсемпе йавăçтарас тата комсомолăн çамрăк стахановцăсем хушшинчи пĕтĕм ĕçне лайăхлатас задачă лартас. Çамрăк рабочисене ударник пулма, ударниксене—стахановцă пулма, стахановцăсене—производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшас.

Комсомол организацийĕсен, кайа йулакансене малта пыракан çамрăк рабочисем йенчен пулăшмала туса, партипе хусăлăх организацийĕсене бригадăсен, участкăсен, сменăсен стахановла ĕçне организацилеме пулăшмала.

2. Ленинла комсомол 20 çул тултарнă май, заводсенчи, фабриксенчи, шахтăсенчи, рудниксенчи, районсенчи, облăçсенчи, крайсенчи тата республикăсенчи комсомолĕцсемпе комсомол организацийĕсен социализмла ăмăртăвне пуçарас; 1938 çул—Сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулĕ пĕтĕм Ленинла комсомолшăн, пĕтĕм совет çамрăкĕсемшĕн ударлă, стахановла ĕçлемели çул пулса тăтăр.

Ăçта пĕтĕм комсомолĕцсемпе çамрăк рабочисем, работницăсем, çамрăк инженерсем, техниксем стахановла ĕçлеççĕ, кайа йулаканнисене пулăшаççĕ, вĕсене стахановла ĕçлеме вĕрентеççĕ, çамрăксен политикăлă, пĕтĕмĕшлĕ тата техникăлă вĕренĕвне ăçта кăтартулă, стахановла организацилене,—çак ăмăртура çав комсомол организацийĕсем малта пыраканнисем тата çĕнтерекеннисем пулаççĕ.

3. Çамрăк стахановцăсене тата пĕтĕм çамрăксене техникăна вĕрентесси—комсомол организацийĕсен чи пысăк тата куллĕнхи задачи пулать, тесе шутлас.

Техминимум кружокĕсен тата техникăна вĕренмели курссемпе шкулсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмала, хусăлăх оргăнĕсене çĕнĕ шкулсем, курссем тата кружоксем организацилеме пулăшас. Стахановцăсемпе специалиссем пулăшнипе, ăçта кирлĕ, унта техникăла вĕренĕвĕн хальхи программисене çĕнĕрен пăхса тухассине организацилемеле. Квалификацилĕ преподавательсене суйласа илес тата вĕсене пулăшу парас ĕçе хутшăнмала. Кружоксемпе курссене учебниксем, пăхса вĕревмели хатĕрсем тата вĕренме йурăхлă помещенисем памала.

Государствăлă техникла екзамĕнне формальнă мар, халăх умĕнче ирттермеле тăвас пулать, государствăлă техникла екзамĕнне кашни комсомолец тата кашни рабочи „отлично“ тата „хорошо“ тыттăр—хатĕрленӳ ĕçне çапла организацилес пулать.

Çамрăк рабочисене стахановла ĕçĕн чи лайăх метăчĕсене вĕренмешкĕн пулăшма, комсомол комитечĕсене пĕрпек профессилĕ çамрăк рабочисен пухăвĕсене ирттерме, унта стахановцăсемпе специалиссен доклачĕсене, лекцийĕсене итлемеле тума хушас; малта пыракан рабочисене кайа йулаканнисене пулăшма çирĕплетмеле; стахановцăсене çамрăксем хушшинче калаçусем ирттерме, инструкцисем пама тата стахановла ĕç майĕсене ĕç патĕнче, практикăла кăтартма пур майсемпе те йавăçтармала.

4. Çамрăк стахановцăсен культурă тата пĕтĕмĕшлĕ пĕлӳ çулĕшне çĕклесси комсомол организацийĕсен питĕ пысăк обйазаннăçĕ пулать, тесе шутлас.

Касхи вăтам шкулсемпе пĕтĕмĕшле вĕренӳ курсĕсене сармала тата тĕреклетмеле. Шкулсемпе курссен ĕçне тăтăшах сăнаса тата пулăшса тăмала, вĕрентӳ пахалăхне тĕрĕслемеле, шкулсемпе курссене тытма государствă паракан укçасене мĕнле расхутланине контроллесех тăмала.

5. Çамрăксен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлес выранне, комсомол комитечĕсем нумай чухне ĕçе тĕрĕслесе çитменлĕхсене палăртнипех çырлахса, çав çитменлĕхсене пĕтерессишĕн йапăх кĕрешни тĕрĕс мар, тесе шутлас.

Çамрăк стахановцăсене тата пĕтĕм çамрăксене культурă тĕлĕшпе пăхассине, вĕсен канăçне тата йăйисене организацилес ĕçе ПСÇЛКС комитечĕсен тĕпренех лайăхлатмала.

Общежитисенче ĕçлессине лайăхлатмала, вĕ ене вăхăтра йусаттармала тата образецлă йĕркелемеле. Общежитисенче пурăнакан рабочисемпе работницăсене хăйсене те йĕркесĕрлĕх çине, таса марлăх çине, пĕр-перинпе культурлă мар калаçни çине тӳсĕмсĕр пăхма вĕрентес пулать. Комсомол организацийĕсен столовăйсен, прачечнăйсен, мунчасен, парикмахерскисен ĕçне лайăхлатма пулăшмала тата вĕсен ĕçне тăтăшах тимлĕн асăрхаса тăмала.

Клубсен ĕçне организацилемеле. Клубра çавăн пек условисем тăвас пулать: кашни çамрăк рабочипе работницă унта канма, театрăн лайăх постановкине, çĕнĕ кинокартинă курма, интереслă лекци итлеме, харпăрхăй пултарулăх кружокĕсене хутшăнма пултартăр. Физкультура коллективĕсемпе секцийĕсен ĕçне пур майсемпе чĕртсе йамала. Çĕнĕ клубсем, хĕрлĕ кĕтессем, стадионсем, катоксем тата парксем тăвас ĕçе хутшăнмала. Культурă ĕçне ирттерме панă укçасене тĕрĕс тата усăлă расхутланине астуса тăмала.

Хĕрарăм çамрăксен культурăпа йăла нушисене питĕ пысăк тимлĕхпе пăхас пулать, ача сачĕсене, йаслĕсене лайăх ĕçлеттерессишĕн тăрăшмала, çамрăк работницăсене анăçлă вĕренме, канма тата ĕçлеме условисем туса памала.

6. Комсомол комитечĕсене çамрăк специалиссемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатма хушас. Çамрăк бригадирсене, мастăрсене, техниксене, инженерсене стахановцăсен пуçарăвĕн пуçне тăма тата стахановла бригадăсем, участкăсем, цехсем тата заводсем тăвассишĕн кĕрешӳ сарма пулăшмала.

Производствăри кашни çамрăк командир—комсомолец социализмла ĕç тухăçлăхĕшĕн кĕрешессине çине тăрса, тимлĕн организацилекенни пулмала, унăн участки производствăра чи малта тăмала.

Комсомол комитечĕсенчен хăшĕ-пĕрисем çамрăк специалиссен ĕçĕнчи, вĕсен поведенийĕнчи çитменлĕхсене (общество ĕçĕнчен пăрăнни, комсомол пухăвĕсене çӳременни, рйадовой комсомолецсем çине мăнаçлăн пăхни) йăвашчунла пăхса тарăнланма май пани, вĕсене критиклемени тĕрĕс мар, тесе шутлас. Çавăн пекех, çамрăк специалиссене техникла лекцисем вулама, техникă тата политикă кружокĕсемпе шкулĕсенче вĕрентме хушас выранне, вĕсемпе тĕрлĕрен вак-тĕвек ĕçсене (хаçат сарасси, плакатсем çыпăçтарасси т. ыт.) тунă çерте усă курни те тĕрĕс мар.

7. Сăтăрлă ĕç йулашкийĕсемпе тата стахановла йухăма саботаж тунипе кĕрешме, стахановцăсемпе çамрăк специалиссен творчествăлă пуçарăвне хĕсекен çынсене хирĕç кĕрешме комсомол комитечĕсен çамрăксене йавăçтарас пулать.

Предприйатисенче «çăмăл кавалери» группиисен ĕçне лайăхлатмала. Вĕсенче ĕçлеме стахановцăсемпе çамрăк специалиссене, производствăри çитменлĕхсене пĕлсе тупма тата пĕтерме пултараканскерсене, йавăçтармала. „Çăмăл кавалериссен“ тимлĕхне сăтăрлă ĕç йулашкийĕсене пĕтересси, рабочисемпе работницăсене вĕсен производствăлă ĕçĕнче пулăшу парасси: простойсемпе штурмовщинăна хирĕç кĕрешсе, предприйатисене материалсем, инструментсем тăратас, оборудованине хатĕрлес тата ремонтлас ĕçри чăрмавсене сирессине çинче пĕтĕçтермеле.

Рационализацилĕ сĕнӳсемпе изобретенисене пăхса тухса производствăра мĕнле вырнаçтарасса пынине „çăмăл кавалери“ группиисен тăтăшах контроллесе тăмала.

8. Çамрăк стахановцăсемпе ĕçлессине малала сарса, вăйлатса пырасси комсомол комитечĕсене малала ĕçе конкретлă йертсе пымала тума, „пĕтĕмĕшпе“ тата „тĕпрен илсе“ йертсе пырассине пĕтерме хушать.

Çамрăксем хушшинче ĕç стажĕпе, производствăри квалификацийĕпе, пĕлĕвĕпе, политикăла çирĕплĕхĕпе уйăрăлса тăракан группăсем пур. Çак группăсенчен пĕрне те манса хăвармала мар. Çамрăк мастăр, бригадир тата ĕçре хăнăхман çамрăк рабочи патне пĕр виçепе пыма çук. Техникă тĕлĕшĕнчен сахал пĕлӳлĕ пулнă пирки çĕç нормăна тултарайман çамрăк рабочине тăтăшах брак тăвакан, прогул тăвакан рабочипе, рвачпа пĕр карта лартса пăхма çук. Пĕрисене чăтăмлăн пулăшас пулать, вĕрентес пулать, ыттисене сайра хутра кăна мар общество йенĕпе, хушăран—администрацилĕ йĕркепе те, хĕсес пулать.

ПСÇЛКС комитечĕсен, комсомол работникĕсен стахановцăсенчен ĕç çине кирлĕ пек пăхма, харпăрхăй ĕçне тĕпĕ йĕрĕпе, вак-тĕвексем таранах алла илме, тунă çитенӳсемпе лăпланмасăр, малала, пысăк çĕнтерӳсем патне, кайма вĕренмеле.

* * *

Комсомолецсемпе совет çамрăкĕсем 1938 çула—Сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çулне тата ытларах пысăк активлăхпа, творчествăлă пуçарупа паллă тăвасса, стахановла йухăм речĕсене малала сарасса тата социализмла ăмăрту йалавне тата çӳлерех çĕклессе ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ шанса тăрать. Образецлă ĕçленипе тата вĕреннипе çамрăк стахановцăсем социализмлă ăмăртура мала тухнисене пама халăх комиссариачĕсем çирĕплетнĕ хĕрлĕ йалавсене, значоксене, мухтав хучĕсене тата аттестатсене илесшĕн тимлĕн кĕрешĕç тата илĕç.

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ.

„Çурçĕр полюсĕ“ станцинче

Папанин йулташ радиограмми

Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп Управленийĕ Папанин йулташран çакăн пек радиограммă илнĕ:

„ÇУРÇĔР ПОЛЮСĔ“ Станци, февралĕн 9-мĕш. Февралĕн 7-мĕшĕнче çĕрле шторм хумĕ пурăнмали палаткăна тата радиопалаткăна çурса пĕтерчĕ, йапаласем хунă Нартăна çавăрса пăрахрĕ. Йуртан пĕчĕк пӳрт туса, лайăх вырнаçрăмăр.

Февралĕн 8-мĕшĕнче малтанхи хут Гренланди çыранне куртăмăр. Виçĕ упа тытрăмăр. Февралĕн 9-мĕшĕнче радиона çĕнĕ, усă вырăна лартрăмăр. Ирхине 5 сехетре координатсем — çурçĕр широтин 72 градусĕпе 06 минути тата хĕвеланăç долготин 19 градусĕпе 38 минути. Куçса пыратпăр, çыран курăнать. Талккăшлĕ пăр. Шăнма тытăнать. Пурте йĕркелĕ.

Салам Папанин“.

Метеорологилĕ черетлĕ сводкăсем

Польарти паттăр Совет тĕпчевçисем Папанин, Кренкель, Ширшов тата Федоров йулташсем куçса çӳрекен пăр çинчи ĕçсене малала туса пыраççĕ. Вĕсем метеорологилĕ сводкăсене шăп кăтартнă вăхăтсенчех парса пыраççĕ. Февралĕн 10-мĕшĕнче Мускавра „Çурçĕр полюсĕ“ станцинчен черетлĕ сводкăсем илнĕ.

12 сехетре кăнтăрла „Çурçĕр полюсĕ“ станци çурçĕр широтин 72 градусĕпе 6 минутинче, хĕвеланăç долготин 19 градусĕпе 38 минутинче пулнă. Станци районĕнче çанталăк уйар пулнă. Çурçĕр йенчен икĕ баллă çил вĕрнĕ. Температурă 22 градус сивĕ.

(ТАСС).

Папанин пăрĕ патне

„МУРМАНЕЦ“ БОРТĔ, февралĕн 10-мĕш. (ТАСС-ран йатарласа кайнă корреспондент, радио тăрăх). Февралĕн 7-мĕшĕнче кăнтăрла „Мурманец“ Йан-Майен утравĕ сывăхĕнче çурçĕр йенчен çил хăваласа пынă пăрсем хушшинче пулчĕ. 12 балла çитекен вăйлă-шторм тата çил тăвăл пăрсене хытă хĕссе лартрĕ. „Мурманец“ команди 3—4 метр хулăмĕшлĕ пăра ватса салатса тăкрĕ.

Февралĕн 8-мĕшĕнче çил лăпланнă, вак пăрсем (шĕлкĕш) пысăк талкăшпа шăнса ларни „Мурманеца“ малала кайма кансĕрлерĕ. Касхине „Мурманец“ пăрсем хушшипех малала кайма пуçларĕ. Сакăр баллă хум пире малала кайма пулăшрĕ. Тĕмиçе сехет иртсен пысăк вăйа хурса таса шыв çине тухма май килчĕ.

Пайан 7 сехетре эпĕр Çурçĕр широтин 69 градусĕпе 05 минутинче тата хĕвеланăç долготин 12 градусĕпе 04 минутинче пултăмĕр. Çурçĕрпе çурçĕр-хĕвеланăç йенчен пĕр баллă çил вĕрчĕ. Çанталăк уйар, температурă 4 градус сивĕ пулчĕ.

„МУРМАН“ БОРТĔ, февралĕн 10-мĕш, (радио тăрăх). Пайан 15 сехет те 40 минутра „Мурман“ çурçĕр широтин 72 градусĕпе 5 минутинче тата хĕвелтухăç долготин 5 градусĕпе 28 минутинче пулчĕ. Вăтам хăвăртлăхпа пĕр сехетре 10 узел (тинĕс узелĕ—1¾ çухрăм) кайатпăр. Çурçĕр йенчен 6 баллă çил вĕрет.

(ТАСС).

„Таймыр“ Папанин лагерĕпе çыхăну тытать

Кренкелпе радиотелефон тăрăх калаçни

„ТАЙМЫР“ БОРТĔ, февралĕн 10-мĕш. (радио тăрăх). Пайан кăнтăрла иртни пĕр сехетре Папанин лагерĕпе çыхăнтăмăр. Кренкелпе радиотелефон тăрăх калаçрăмăр. Вĕсен пăрĕн координачĕсем—çурçĕр широтин 71 градусĕпе 56 минучĕ, хĕвеланăç долготин 20 градусĕпе 13 минучĕ. Лагерте пурте йĕркелĕ, вунă баллă çилпе капланнă пăр, шăнса ларать. Самолёт анса ларма майлă пăр çук. Вăхăчĕ вăхăчĕпе çутă пулсассăн, папанинецсем айакра Гренланди çыранне кураççĕ. Вĕсемпе тăтăшах çыхăну тытасси çинчен калаçса татăлтăмăр.

Пирĕн координатсем—çурçĕр широтин 71 градусĕпе 50 минучĕ, хĕвеланăç долготин 10 градусĕпе 18 минучĕ. Вăйлă шторм. Хума хирĕç куçма пуçларăмăр. Пурте сывă. Карап çинче пурте йĕркелĕ.

„Таймыр“ çинчи експедици руководителĕ Остальцев.

ХРОНИКĂ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Йемельйан Николайевич Николайев йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссарĕн заместителĕнче хăварса, Çĕрĕç халăх комиссариачĕ çумĕнчи Тĕпттырă Управлени начальникне лартнă.

ИЗВЕЩЕНИЕ

Нижеследующие товарищи вызываются для участия при разборе их апелляций на выездное заседание Партколлегии при Уполномоченном КПК при ЦК ВКП(б) по Чувашской АССР.

13 февраля 1938 года к 10 часам утра в Канаше:

1. Федоров А В.—Канашский РК.
2. Евдокимов Н. Е.—Канашский РК.
3. Никонов Ф. Н.—Канашский РК.
4. Петухов К. В.—Канашский РК.
5. Кудрявцев М. А.—Шихазановский РК.
6. Петров Виктор — Шихазановский РК.
7. Беспалов—Шихазановский РК.

14 февраля 1938 года к 10 часам утра в Канаше:

1. Кудаков Т. М. — Шемуршинский РК.
2. Недеров И. М.—Урмарский РК.
3. Матвеева Д. С. — Шемуршинский РК.
4. Макаров С. М.—Янтиковский РК.
5. Сафин Х. С.—Шихирдановский РК.
6. Смирнов П. К.—Батыревский РК.
7. Григорьев В. Т.—Ибресинский РК.

16 февраля 1938 года к 10 часам утра в Шумерле:

1. Серебряков П. В.—Красно-Четайский РК.
2. Мигушина Е. К. — Красно-Четайский РК.
3. Кузьмин В. Х. — Красно-Четайский РК.
4. Кузнецова В. П. — Красно-Четайский РК.
5. Тарасов М. П.—Шумерлинский РК.
6. Митюков П. М.—Вурнарский РК.
7. Краснов М. Н.—Вурнарский РК.

19 февраля 1938 года к 10 часам утра в Алатыре:

1. Кашин М. И.—Алатырский РК.
2. Гаврилов М. Г.—Алатырский РК.
3. Пичугин Н. И.—Алатырский РК.
4. Серебряков К. С.—Алатырский РК.
5. Серебряков И. С.—Алатырский РК.
6. Наумов А. Г.—Алатырский РК.
7. Бормоткин Ф. С.—Кувакинский РК.
8. Павленков А.—Порецкий РК.
9. Анисимов И. А.—Алатырский РК.

Райкомам ВКП(б) просьба обеспечить явку вышеуказанных товарищей и выслать своих представителей с материалами.

ПАРТКОЛЛЕГИЯ.

На заседание комиссии по приему и исключению из рядов ВЛКСМ при Чуваш. ОК ВЛКСМ к 10 часам утра на 13 февраля 1938 года в г. Чебоксары (улица К. Маркса, д. № 13) для участия в разборе поданной апелляции.

ВЫЗЫВАЮТСЯ:

1. Родионова Зоя С.—Чебоксары, Горсовет.
2. Захаров Николай С.—Козловский р-н, с. Никольское.
3. Орлов Василий Н.—гор. Чебоксары, ВКСХШ.
4. Магницкий Михаил И.—г. Чебоксары, ул. Герцена, 4.
5. Осипов Алексей И.—Козловский р-н, д. Можары.
6. Васильев Александр В.— г. Чебоксары, Пединститут.
7. Семячкина Мария Н.—г. Чебоксары, Чувашская, 1.
8. Иванова Елена И.—Чебоксарский р-н, д. Маснеры.
9. Молодов И. О.— г. М.-Посад, кинотеатр.
10. Саверкина Вера И.—г. Чебоксары Наркомюст.
11. Цветкова А. М.—г. Чебоксары, Наркомпрос.
12. Майоров Андроний Е.—г. Чебоксары, Гостиница.
13. Солдаченко Л. М.—г. Чебоксары, Типография промполиграф.
14. Курочкин В. П.—г. Чебоксары, ул. Заводская, д. № 3.

Райкомы ВЛКСМ и Чебоксарский горком должны выслать в Обком комсомола на 13 февраля 1938 г. своих представителей и обеспечить обязательную явку вызываемых лиц.

Путевые расходы Обком оплачивать не будет.

Пред. комиссии по приему и исключению из рядов ВЛКСМ при Чуваш. ОК ВЛКСМ Д. АНДРЕЕВ.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Китайри вăрçă

ВĂТАМ КИТАЙРА

СУЙЧЖОУ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Нанкинран кăнтăр йенчи районра февралĕн 7-мĕшĕнче çапăçусем кунĕпех Уху хули çывăхĕнче пынă. Февралĕн 6-мĕшĕнче Китай çарĕсем аеродрома туртса илнĕ. Хула çывăхĕнчи нефт склачĕсенче вут тухса кайнă. Хальхи вăхăтра çапăçусем хулана çĕнсе илессишĕн пыраççĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Британ Йунайтед Пресс агентствин Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Ţаңцзиң—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинчи сектăрта Китай çарĕсем Гаочене (Фын-Йанран кăнтăрпа хĕвеланăçнеле) йышăннă.

„Ивнинг Стандарт“ хаçатăн Гонконгри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Китай чаçĕсем, Чжецзйан провинцинче йапонецсенчен Фуйан хулине (Ханчжоуран кăнтăрпа хĕвеланăçнели хула) туртса илнĕскерсем, хальхи вăхăтра Ханчжоу çине наступлени туса пыраççĕ. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Китай çарĕсен кучухнехи çĕнĕ хĕçпăшалсем çителĕклех пур.

СУЙЧЖОУ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 8-мĕшĕнче касхине Ţаңцзиң—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинчи сектăрĕнче, Бенпу хули районĕнче, Йапони салтакĕсен 200 çынна йахăн ушкăнĕ Хуайхе йатлă йуханшывăн çурçĕр çыранĕ йенне ишсе каçнă. Çыран хĕррине тухсан, Китай çарĕсем вĕсене штыксемпе атакă туса кĕтсе илнĕ, хире-хирĕç тытăçса çапăçнă хыççăн йапонецсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Уху районĕнче çапăçува Китай авиацийĕ хутшăнма пуçланă май тата Китай çарĕсем контрнаступлени тунă май, центрти фронтăн çак участкинче йулашки кунсенче китайецсен лару-тăрăвĕ самайах çирĕпленнĕ. Йулашки виçĕ хут хушшинче Фын-Йан тата Бенпу районĕсенче Китай самолёчĕсем кашни кунах Йапони позицисем çине бомбăсем пăрахаççĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Ţаңцзиң—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче Китай çарĕсем Льанчжен хули патĕнче (Бенпуран çурçĕреле) йапонецсене хĕвеланăç йенчи флангран пырса çавăрса илме тăрăшаççĕ. Февралĕн 9-мĕшĕнче Китайăн вунпĕр самолёчĕ Бенпу çывăхĕнче Йапони позицисем çине бомбăсем пăрахнă.

СУЙЧЖОУ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 9-мĕшĕнче Йапони самолёчĕсем (пурĕ 30) Ханькоу тата Ханьйан çине бомбăсем пăрахнă. Пурĕ 100 бомба йахăн пăрахнă. Ханьйаври нумай çуртсене ишĕлтернĕ.

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 9-мĕшĕнче Бейпин — Ханькоу чукунçулĕнчен хĕвелтухăçнеле Йапони çарĕсем хĕрĕх километр чухлĕ малала куçнă. Наньло хулине (Доминран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле) йышăннă хыççăн, йапонецсем Цинфын йеннеле (Наньлоран 16 километр кăнтăрала) куçса пыраççĕ. Китайран илнĕ сведенисем тăрăх, фронтăн çав участкинче Йапони çарĕсен вунă пин салтак шутланать. Çавăн пекех Йапони çарĕсем Чжандерен чукунçул тăрăх куçса пыраççĕ.

СУЙЧЖОУ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Шаньдун провинцинче Йапони çарĕсем Ţаңцзиң—Пукоу чукунçулĕнчен хĕвелтухăçнеле икĕ колоннăпа кăнтăрала куçса пыраççĕ. Пĕр колонни Гаоми йенчен (Шаньдун провинцин хĕвелтухăç пайĕ) куçса пырать. Йопони çарĕсем Чжучен хулине илнĕ. Цзуйчжоу хули китайецсен аллинче. Йапонецсен иккĕмĕш колонни Тайань йенчен (Цзинанрен кăнтăрала) шоссе çулĕ тăрăх малала пырать. Синтай тата Мыньинь йатлă хуласене йапонецсем йышăннă.

КĂНТĂР КИТАЙРА

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Кантонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 10-мĕшĕнче Йапонин виçĕ çар карапĕ Боккатигрис форчĕсем çине пенĕ. Фортсенче çийĕнчех Йапони карапĕсене хирĕç пеме пуçланă. Карапсем çинчен хире-хирĕç персе тăрасси çур сехете пынă. Çавăн пек хире-хирĕç персе тăнă хыççăн Йапони карапĕсем кайала тинĕсе тухса кайнă. Корреспондент малала çапла пĕлтерет: фортсем çине пересси кашни кунах пулса пырать, анчах темĕн чухлĕ персен те йапонецсем фортсене пысăк сийен кӳме пултараймаççĕ.

Сăра-квас хатĕрлекен Шупашкарти предприйати

Атăл çинчен пăр касса турттарма

февралĕн 20-мĕшĕнче

ТОРГИ ТĂВАТЬ

Торгире пулас текен колхозсен çак адреспе пымала:

Ленинградскайа 29. Сăра-квас предприйати кантурĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—1

Академи театрĕнче

февралĕн 12-мĕшĕнче

Чăвашла спектакль

М. ГОРЬКИЙ

„НА ДНЕ“

4 пайлă

Театрăн художествă руководителĕ Йе. Н. ТОКМАКОВ лартать.

Художник Н. Ф. БАЙАКОВ.

Талон № 108. Абонемент №1

Талон № 12.

„Чăваш коммунĕ“ сыранса илмелли хакĕсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайăла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 75. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15.500 [illegible]